## КАЯЛЛА ЧАКМАСТЬ

— Атьăр, кĕрĕр,— терĕ Краччов Павăлĕ хут пĕлменлĕхе пĕтерес шутпа пынă вĕренме пынă хĕрсене.

Хĕрсем хул хушшине кĕнекепе пĕр лутăрканчăк тетрадь хĕстернĕ, акăшсем пек утса кĕрсе кайрĕç те харпăр хăй вырăнне йышăнса ларчĕç. Ыттисем, Халтуринăпа вĕренекенĕсем, тăрса юлчĕç кăритурах. Вĕсем те тепĕр 15 минутран кĕрсе вырнаçса ларчĕç. Халтуринă хытă çил вĕрнĕ чухнехи çулçă вĕçнĕ пек хăй пӳлĕмĕнчен тухса йăрт-йăрт хыттăн васкаса лавкка кăлпасси илме кайнă чухнехи пекех кĕрсе кайрĕ. Краччов шкапран шут шăрçисем кăларчĕ те хĕрсене валеçсе пачĕ. Хăй темĕскер шкапра шыра пуçларĕ.

Хĕрсене уроксем паман пулас — карттинкăсене пăхса лараççĕ, нимĕн те вуламаççĕ.

Краччов шкапра тупмаллине тупаймарĕ пулас, шут çине хурса шутлама вĕрентме пуçларĕ. Пĕр хĕрĕ, Мари ятлăскер, тĕрĕс хурайман пирки Краччов çиленсе кайрĕ. Маринине тепĕр хут шутлаттарчĕ, каллех тĕрĕс тухмарĕ. Краччов хытах çиленсе кайрĕ.

— Не путу польше с вами саниматсă, етăвă не снайĕтĕ!— кĕç шкула йăтса антаратчĕ, анчах темĕнле тытăнса ларкаларĕ.

Тепĕр пӳлĕмре вĕренекенсен чĕри те пушар тухнă сасса илтнĕ пекех хыттăн тапа пуçларĕ. Леш тата çинçе майри, пукан çинче лараканскер, хăранипе кĕçех ӳкетчĕ, парттăран тытса çăлăнкаласа юлчĕ.

Краччов нимĕн чĕнмесĕр пушаври пек пирус чĕртсе тивертрĕ те, шкул урайне авăнтарса, темĕн пек йывăр япалана йăвантарнă пек тухса вăркăнчĕ. Шăлĕ шăтăртаттарать. Те шăрчăкран, те хытă утнипе икĕ янахĕ çапăнаççĕ.

Хĕрсем те хуллен-хуллен саланчĕç, кĕçĕр аван вĕреннĕрен пулас, пурте ним чĕнмесĕр урама тухрĕç. Килелле ута пуçласан тин Краччова мухтаса пыраççĕ.

Хуллен-хуллен уйăрла-уйăрла килĕсене кĕрсе саланса пĕтеççĕ.

Эрне иртни темиçе кун та çитет, Краччов çаплах вĕрентмест. Хĕрсем каясшăн, вĕрентекен çук.

Чăнах та ку Краччов комсомолĕс «комсомол каялла чакмасть!» тенине ĕçе кĕртрĕ. Пĕрре каланă «урăх санятине каймастăп!» тенинчен пĕртте чакмарĕ.

Лешĕ тата, çинçе майри, Халтуринă та вĕрентсе кăларма шутламарĕ, аплипех пурăнаççĕ ĕнтĕ. Хĕрĕсене татах тепĕр çул вĕрентмелле пулать, хĕрĕсем вĕренесшĕн вĕт... каялла чакмастпăр теççĕ...

1930